# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

79 (7504) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Сентябрĕн 27-мĕшĕ – Воспитательсен тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунĕ



*Районти шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вăй хуракансем хушшинче пултаруллă та хастар ĕçченсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Муркашри «Солнышко» ача садĕнче воспитатель пулса ĕçлекен Оксана Валерьевна Прокопьева.*

*О.В. Прокопьева 2002 çулта Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчен вĕренсе тухнă, шкул çулне çитменнисен педагогикин тата психологийĕн факультетне пĕтернĕ. Çавăнтанпах «Солнышко» ача садĕнче ясли ушкăнĕнче воспительте тăрăшать. Хăйĕн пултарулăхне, ĕçри тăрăшулăхне кура вăл кăçал педагогика ĕçченĕсен республикăри конкурсĕнче мала тухса Чăваш Республикин Президенчĕн грантне илме тивĕç пулнă.*

*Сăн ӳкерчĕкре: Оксана Прокопьева хăйĕн воспитанникĕсемпе пĕрле.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

**ХИСЕПЛĔ ВОСПИТАТЕЛЬСЕМ, ШКУЛ ÇУЛНЕ ÇИТМЕН АЧА-ПĂЧА УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЧЕ ВĂЙ ХУРАКАНСЕМ!**

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче – Воспитательсен тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунĕ. Çак уяв вăл пирĕн çĕршывăн пулас ăрăвне хатĕрлекенсем умĕнче пуç тайни пулса тăрать.

Ачасене воспитани парасси – çĕр çинчи чи пĕлтерĕшлĕ те пархатарлă ĕçсенчен пĕри. Ачасем – пирĕн пуласлăх, пирĕн шанчăк, пирĕн тĕрек. Сирĕн хулпуççи çине пысăк ответлăх тиеннĕ – çĕршывăн чи пĕчĕк гражданĕсемшĕн тăрăшасси, вĕсене ачашлăхпа ăшă туйăм парнелесси, вĕсемпе пĕрле хуйхăрасси тата йывăр вăхăтра пулăшасси, вĕсене сывă та тĕреклĕ ӳссе аталанма пĕтĕм вăйран тăрăшасси, кирлĕ пĕрремĕш ăсталăхпа хăнăхăва парасси, хăйсен пĕчĕк Тăван çĕршывне юратма вĕрентесси. Çак йывăр та пархатарлă ĕç пысăк хисепе тивĕç.

Район администрацийĕ сире професси уявĕ ячĕпе ăшшăн тата чĕререн саламлать, сирĕн чĕре ăшши, ырă кăмăл, педагогика ăсталăхĕ пирĕн ачасен ача сачĕсенчи кашни кунне хаваслăхпа телей кунĕ туса хурĕç тесе шанса тăрать. Ачасен куçĕнчи савăнăç шевли вара – хăвăр ĕçĕршĕн пысăк парне.

Район администрацийĕнчен тата хамран професси уявĕпе – Воспительсен тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе чи хĕрӳ салам йышăнса илĕр.

Пурсăра та сире ырлăх-сывлăх, пултарулăх ĕçĕнче ăнăçу, ачасен юратăвне, ашшĕ-амăшĕсен хисепĕпе пулăшăвне, ăнăçусем сунатăп!

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсене хăйсен професси уявĕпе РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ П.В. Семенов та саламлать, ырлăх-сывлăх, ăнăçусем, телей сунать.

## Райадминистрацире

# Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ, Муркаш ял тăрăхĕн, «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществин администрацийĕсем, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн правленийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи сентябрĕн 17-мĕшĕнчи 424 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн – **Елена Ивановна БОРИСОВАНА**, «Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн аслă вожатăйне.
2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн – **Зоя Прокопьевна ИВАНОВАНА**, «Муркаш районĕнчи тĕп больница» сывлăха сыхлас ĕç муниципаллă учрежденийĕн аслă медицина сестрине.
3. Строительствăра нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Венера Анатольевна ЗОЛОТОТРУБОВАНА**, «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществинчи штукатур-малярсен бригадин бригадирне.
4. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Вера Степановна ГОЛУБЕВАНА**, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп бухгалтерне.

---

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен районти организацийĕн канашĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи сентябрĕн 24-мĕшĕнчи 429 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Людмила Юрьевна КОКУРКИНАНА**, «Путене» ача сачĕн воспитательне;

– **Ольга Гавриловна ЛОЖНОВАНА**, «Колокольчик» ача сачĕн тумтир çăвакан машинистне;

– **Лия Львовна ПОРФИРЬЕВАНА**, «Золушка» ача сачĕн воспитательне.

2. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Валентина Никандровна УГАРОВАНА**, Калайкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕн воспитательне.

## Поздравляем



**Поздравляем Кабуркина Сергея Александровича и Кирильцеву Аллу Ивановну с днем бракосочетания! Желаем счастья, семейного благополучия и любви!**

**Родные и друзья.**

## Юбилей



### Саламлатпăр

Юратнă аннене, асаннене, мăшăра – **Эльза Ильинична ЛЮБИМОВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр.

Кашни ир хĕвеллĕ туйăм çураттăр,  
Кайăк юрри йăл-кулă парнелетĕр,  
Куççем куççульпе нихăçан та ан тулччăр,  
Эсĕ пирĕн пĕрре, саламлатпăр пурте.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, кĕрĕвĕ, 2 мăнукĕ, çывăх тăванĕсемпе юлташĕсем.**

---

Çĕр çинчи хаклăран та хаклă чи юратнă çыннăмăрăн – Итакаччкасси ялĕнчи **Ирина Яковлевна ПЕТРОВАН** авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче çуралнă кунĕ. Юратнă аннене, ăшă кăмăллă асаннене, хунямана, тăхлачăна чĕререн саламлатпăр. Лайăх ĕçӳсемшĕн тĕрлĕрен Тав çырăвĕсем, наградăсем илме тивĕç пултăн. Ял-йышра та яланах хисепре. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна, нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, телей, иксĕлми вăй-хал сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, мĕн пур тăванĕсем.**

**«Радиохум – хаçат страницинче. Халăх тата влаç: тĕллевсем пĕр пек, ĕçсем те пĕрле»**

# Нумайăшне татнă, çивĕч ыйтусем татах пур-ха

***Вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ, çулталăк пуçламăшĕнче район администрацийĕн, районти тĕрлĕ службăсен яваплă ĕçченĕсем вырăнсене тухса ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. Çакнашкал тĕл пулусем халăхпа влаç хушшинчи çыхăнăва татах та çирĕплетеççĕ, пĕр-пĕрне çывăхрах ăнланма май пăраççĕ. Халăхăн мĕншĕн чун ыратни те вырăнтан пăхсан татах та уçăмлăрах курăнать-çке. Çав йывăр ыйтусене вара пĕрлех татса пама тивет.***

***Унтанпа ав вăхăт чылаях иртрĕ. Вырма вăхăтĕнче информаципе художество ушкăнĕсем тепĕр хут пулчĕç ял тăрăхĕсенче. Хĕлле тĕл пулусем ытларах ĕç коллективĕсенче, клубсемпе Культура çурчĕсенче иртрĕç пулсан, хальхинче вара асăннă ушкăнсем уй-хирте, йĕтемсем çинче пулчĕç. Çĕнĕрен иртнĕ тĕл пулусем район çыннисене паян мĕн хумхантарнине пĕлнипе пĕрлех çулталăк пуçламăшĕнчи ял тăрăхĕсен кунĕсенче хускатнă ыйтусем епле пурнăçланнине те кăтартса пачĕç.***

***Икĕ тапхăрпа иртнĕ тĕл пулусене пĕтĕмлетме ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн йĕркелӳпе кадр, право ыйтăвĕсемпе тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пай ертӳçинчен Л. Ю. ТАРАСОВАРАН.***

**– Лилия Юрьевна, ял тăрăхĕсен кунĕсем мĕн кăтартса пачĕç?**

– Çынсем малашлăха пăхнине. Вĕсем паянхи кунпа çеç пурăнманнине. Ял тăрăхĕсен кунĕсенче хускатнă ыйтусем шăпах çакăн çинчен калаççĕ те. Ял çыннисем йывăрлăхсемпе килĕшсе ларасшăн мар. Вĕсене пĕрле татса памаллине те ăнланаççĕ.

Пĕтĕмпе вара çулталăк пуçламăшĕнче иртнĕ тĕл пулусенче районта пурăнакансем çĕклекен ыйтусем 115 çитрĕç. 46-шне 1 кварталта тата панă. Палăртмалла, ыйтусене пурне те пĕр харăс тата кĕске вăхăтра татса пама май çук. Çавăнпа та çак сăлтава тĕпе хурса вĕсене çакăн пек ушкăнсене пайлама пулать. Тепĕр 17 ыйтăва кăçалхи 2 çур çулта, 34-шне кăçал çулталăк вĕçленичченчен татса памалла. Тепĕр 9 ыйту шăпи кăçал-çитес çул татăлмалла. Халăхра хускатнă 8 ыйту епле пурнăçланнине яланах контроллесе тăмалласкерсем.

**– Лилия Юрьевна, çулталăкăн малтанхи кварталĕнче татса панă ыйтусем вăхăта сая ямасăр татса памалласкерсем пулчĕç пулĕ. Мĕнлерех ыйтусене тӳрех татса пама май килчĕ?**

– Граждансем транспортпа çӳрес ыйтăва çĕклерĕç чылай çĕрте. Тĕслĕхрен, Ярапайкасси, Ильинка, Уйкас Янасал, Çатракасси, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Чуманкасси ял тăрăхĕсенче. Ыйтусем халиччен çӳрекен автобус рейсĕсене йĕркеллĕ çӳреттерессипе тата çĕнĕ маршрут, рейс хушассипе çыхăннăскерсем. Ку ыйтусене татса панă.

Ял тăрăхĕсен кунĕсем хĕлле иртнĕрен температура режимне йĕркене кĕртессипе çыхăннă ыйтусем те пулмарĕç мар. Сыпайĕнчи, Шурчари шкулсенче, Анаткассинчи шкул-садра сивĕ пулнине палăртрĕç тĕл пулусенче. Ку çитменлĕхе те тӳрех пĕтернĕ.

Урамсене электричество çути кирлине те пĕлтерĕшне кура тӳрех татса памаллисен йышне кĕртмелле. Москакасси тата Турай ял тăрăхĕсенче хускатнă çак ыйтусемпе халĕ ĕçлетпĕр.

Тепĕр проблема – пушар машинисене йĕркеллĕ ĕçлеттерессси. Юлашки çулсенче пушарсем çине-çинех тухни ку ыйтăва татса пама хистет. Ярапайкасси, Шетмĕпуç, Чуманкасси, Юнкă ял тăрăхĕсенче шăпах çак ыйтусене çĕклерĕç. "Лидерпа" Чапаев ячĕллĕ хуçалăхсем ку ыйтăва контроллесех тăраççĕ пулсан, Шетмĕпуçпе Юнкă ял тăрăхĕсенче ку ыйту хальлĕхе татăлнă теме çук-ха.

Ялсен тирпей-илемĕ пирки те тĕплĕ калаçусем пулчĕç ял тăрăхĕсен кунĕсенче. Сăмах ун чухне ытларах вырăнсенче çӳп-çап тăкмалли ятарлă вырăнсем кирли пирки пынăччĕ. Паян кашни ял тăрăхĕнчех çакăн пек вырăнсем пур, анчах та нумай чухне харпăр хăй хуçалăхне тытса пыракансем вĕсемпе усă курасшăнах мар.

**– Ял тăрăхĕсен кунĕсенче чылай çĕрте шыв проблемине хускатрĕç. Ку ĕç халь епле пырать?**

– Чăннипех те, ку ыйту районĕпех тăрать тесен те йăнăшах пулас çук. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче тунă шыв пăрăхĕсем паян пĕр çĕрте, ыран тепĕр çĕрте проблема кăларса тăрататççĕ. Тренккăра (Ильинка ял тăрăхĕ), Хорнуйĕнче (Хорнуй ял тăрăхĕ), Анаткассинче (Катькас ял тăрăхĕ), Вăрманкассинче (Оринин ял тăрăхĕ) шыв проблемине татса патăмăр пулсан, Вăрманкас Хачăкра (Москакасси), Нискассинче (Ярославка), Çуткӳлте (Турай), Кораккассинче (Катькас), Юнкăри Явăльня урамĕнче (Юнкă), Очăкассинче (Çатракасси) ку ыйту татăлман-ха. Çатракасси ял тăрăхĕнчи выççăлккă Хуракассипе Кашмашра та йывăр лару-тăрура хальлĕхе çăлсем пурри пулăшать. Çулталăк вĕçĕччен татса пама палăртнă вĕсенче çак ыйтăва.

Е тата кĕперсемпе каçса çӳремелли вырăнсене юсассине илер. Кун пек ыйтусем те пулмарĕç мар ял тăрăхĕсен кунĕсенче. Тĕслĕхрен, Катькас ял тăрăхĕнчи Кĕрекаçран Шатракассине каймалли вырăна юсанă. Кораккассинчи плотинана юсама вара тăпра нумай кирлĕ, хальлĕхе ку ыйтăва татсах пĕтереймен-ха. Москакасси ял тăрăхĕнчи Хачăк салинчи пĕве урлă каçмалли вырăна юсама пуçланă. Оринин ял тăрăхĕнчи Пăсăрмантан Оринин шкулĕ енне каçмалли кĕпере юсайман пулсан та хальлĕхе, çулталăк вĕçленичченн татса памалли задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Ял тăрăхĕсен кунĕсенче районти библиотекăсене юсаса вĕсене тĕслĕх библиотекăсем туса хурас ыйту та çивĕч тăратчĕ. Ку ыйтăва татса панă.

**– Çулталăк вĕçленичченн вăхăт 3 уйăх ытларах юлать. Çак тапхăрта пурнăçламалли ыйтусенчен хăшĕсене татса панă?**

– Мăн Хураçкари "Тюльпан", Нискассинчи "Улыбка" ача сачĕсен çивиттийĕсене юсанă, Рыккакассинчи, Чуманкассинчи, Очăкассинчи Культура çурчĕсенче юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Çулталăк вĕçленичченн Нискассипе Йӳçкассинчи тасатмалли сооруженисен проектпа смета документацийĕсене хатĕрлесе пĕтермелле.Çак ĕçе çавăн пекех ялсем патне пыракан çулсемпе те тумалла. Çатракасси шкулĕ патĕнче тата Анаткас Хачăкра автобуссем кĕтме павильонсем тумалла.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).